**Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение**
**«Шоршелская средняя общеобразовательная школа**
**имени летчика-космонавта А.Г. Николаева»**
**Мариинско-Посадского района Чувашской Республики**

«РАССМОТРЕНО»
на заседании педагогического совета
(протокол № 1 от 31.08. 2021 г.)

«УТВЕРЖДЕНО»
приказом № 59п.2
от 31.08. 2021 г.

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА
## по учебному предмету
## «Литературное чтение на родном (чувашском) языке»
## 1 класс
## Базовый уровень

Составители: Сергеева Светлана Юрьевна и
Чумбакова Рена Германовна,
учителя начальных классов

**«СОГЛАСОВАНО»**
**Заместитель директора по УВР:**

_________ **Г.П. Ефимова**
30.08. **2021 г.**

**2021 – 2022 учебный год**

## 1. Литература вулавĕ предметăн пулас результачĕсем 1 класс

### 1.1. Харкамлăх (личностные):

*Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:*

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхне уçăмлани;
- ачасем тăван çĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе, литература ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;
- ачасем таврари пурнăç, этем, çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ йĕркеленсе пыни; харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн яваплă пулма хăнăхса пыни;
- шкулта, класра, урамра, килте, хăнара хăвна мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕç вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕç хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине, ĕçе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;
- тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни: хайлавсенчи сăнарсен лайăх тата начар енĕсене шута илни; пĕчĕккĕн аслисемпе пĕрле ĕçе хăнăхса пымаллине, пурнăçра çак хăнăхусем кирлĕ пулассине ăнланни;
- ĕмĕтленни, вĕренни пурнăçра кирлĕ пулние тавçăрни. шкулта вĕренни пĕлӳ пухмалли, аталанмалли, харпăр хăй пурнăçне кăсăклăрах, усăллăрах тума вĕренмелли тĕп мел пулнине ăша хуни;
- ачан кăмăл-сипечĕ çырĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, çынпа ырă пулмаллине, çынсем хушшинче хăвна мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илни;
- шухăшлав ăслайĕсем туптанни.

*Вĕренекенĕн çакна тума пултармалла:*

- ачасене «тăван кĕтес», «Тăван çĕр-шыв» ăнлавсене уçăмлатма, харпăр хăй пурăнакан вырăна юратма, сыхлама хăнăхтарасси; тăван тавралăх, тăван кĕтес çинчен ытларах пĕлме хавхалантарасси; патриотлăхпа гражданлăх туйăмĕсене тарăнлатасси;
- харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;
- аваллăха тĕпчени кирлине, халăх ĕмĕрсем хушши упранă мула хаклама вĕрентни. халăхăн чи пысăк мулĕ – унăн чĕлхи, йăли – йĕрки уявĕсем пулнине вĕрентни;
- чăвашсем ĕçчен халăх пулнине, ачисене çамрăклах ĕçе хăнăхтарнине, аслисен сăмахне итлемеллине, тăвансене пулăшмаллине, ваттисене хисеплемеллине, хăйсене çын çинче тирпейлĕ тытмаллине палăртса хурасси.

### 1.2. Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)

#### Пĕлӳлĕх (познавательные):

*Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:*

- итленĕ е вуланă чух мĕнле лармаллине тата урокра кирлĕ хатĕрсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван çĕр-шыв» ăнлава уçăмлани. Вăл çуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата çĕр-шыв (Раççей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă çыннисем çинчен пĕлни;
- çут çанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе çыхăнса аталаннине курни:
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;

• ачан тавракурӑмӗ анлӑланни: ҫут ҫанталӑкри пулӑмсем, ҫулталӑк вӑхӑчӗсем, ҫемье, чӗр чунсем, ачасен пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен тӗплӗнрех пӗлни, тӗнче курӑмӗ йӗркеленсе пыни;

• туйӑм культури ҫивӗчленни: кирлӗ вӑхӑтра пулӑшма, мӗн тумалла, мӗнле тумаллине тавҫӑра пуҫлани: пысӑк, пӗчӗк, тан услӑха курни, логикӑллӑ шайлаштарайни;

• вӗренӳ хатӗрӗсенче кирлӗ материала шыраса тупма пӗлни;

• вӗренӳ хатӗрӗсенче панӑ символсене, модельсене, схемӑсене, паллӑсене ӑнланни.

**Йӗркелӳ- хаклав (регулятивные):**

***Вӗренекенӗн ҫакна пӗлмелле:***

• тантӑшӗсен тата харпӑр хӑй ӗҫне тишкерейни тата пахалай тишкерӳ -пӗтӗҫтерӳ ӗҫне хӑнӑхни, пӗтӗмӗшлине пайсем ҫине уйӑрма, пайӗсене пӗтӗҫтерме пӗлнитӗрӗс курма, япаласен уҫлӑхри вырӑнне палӑртма пултарни;

• хӑйӗн ӗҫне вӗрентекен, юлташӗсем хакланине йышнни;

• вӗрентекен, класпа пӗрле палӑртнӑ задачӑна татса памалли тӗрлӗ майсем тупнихӑвӑн шухӑшна ӑнлантарса парайни; йӑнӑша курма, пӗр-пӗрне йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарма вӗренни;

• ӗҫ йӗркине, мӗн хыҫҫӑн мӗн тумаллине, мӗншӗн ун пек тумаллине тавҫӑрни;

• ӗҫӗн кашни тапхӑрне вӗрентекен пулӑшнипе хак парса пырайни;

• харпӑр хӑй ӗҫне планлама пӗлни.

**Хутшӑн (коммуникативные):**

***Вӗренекенӗн ҫакна пӗлмелле:***

• шухӑша тӗрӗс те уҫӑмлӑ, ҫыхӑнуллӑ каласа пама тӑрӑшни;

• текстпа ӗҫлеме пӗлни, вулани ҫинчен ҫыхӑнуллӑ тата уҫӑмлӑ каласа пама тӑрӑшни;

• ачан пуплевӗ, йӑнӑша курма, пӗр-пӗрне йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарма вӗренни;

• пуплев культури аталанни: пӗр-пӗр япала, пулӑм, ӗҫ ҫинчен ҫыхӑнуллӑ, кирлӗ сӑмахсемпе уҫӑ курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мӗн ҫинчен тата мӗнле сӑмахсемпе уҫӑ курса калаҫмаллине ӑнкарни, кампа калаҫнӑ чух, хӑҫан, мӗнле сӑмахсемпе (сывлӑх сунни, тав туни, сывпулашни) уҫӑ курмаллине тавҫӑрни;

• ҫывӑх, хирӗҫле, пӗр пӗлтерӗшлӗ, нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене тӗрӗсрех, тарӑнрах ӑнланни, вӗсен ретӗнче кирлине суйлайни;

• сӑмахсен куҫӑмлӑ пӗлтерӗшне ӑнланни;

• чӑваш чӗлхинче сӑмахсен предложенире ҫирӗп йӗрке пуррине ӑнланни, ӑна пуплевре тытса пырайни;

• каласа парассин тӗрлӗ тӗсӗсене (калав, сӑнлав, уйлав) пӗлни. Вӗсен тытӑмӗпе уйрӑмлӑхӗсене курма, калавӑн тӗрлӗ тӗсне йӗркелеме пултарайни;

• калав темине, тӗп шухӑшне палӑртайни;

• хутшӑну пуплевӗ (диалог) тытӑмне, унти предложенисен хӑй евӗрлӗхне (ытларах тулли мар предложенисем) пӗлни. Диалог шалашӗ пӗр темӑна, пӗр тӗп шухӑша пӑхӑнса тӑнине ӑнланни. Майӗпен хутшӑну пуплевне тӗрлӗ пуплев ситуацийӗсенче уҫӑ курма пултарни;

• ушкӑнпа ӗҫлеме пӗлни;

• сӑмах йышӗ пуянланни;

• ҫынсем тӗрлӗрен шухӑшлама пултарнине ӑнланни.

***Вӗренекенӗн ҫакна тума пултармалла:***

• автор кӑмӑлне асӑрхама, харпӑр хӑй кӑмӑл-туйӑмне сӑнама, палӑртма хӑнӑхтарасси;

• ачасен илемлӗ, палӑртуллӑ вуланине аталантарасси, вуласа тухни тӑрӑх ыйтусем лартасси тата вӗсем ҫине туллин хуравласси, хӑйсен шухӑшне уҫӑмлӑ палӑртма вӗрентесси;

• группӑсемпе мӑшӑрпа ӗҫлеме хӑнӑхтарасси; ачасене хӑйсен ӗҫне хаклама вӗрентесси.

### 1.3. Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем:

*Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:*

- илемлĕ хайлавсене йышăнма, итлеме-ăнланма малалла хăнăхса пыни;
- «халăх сăмахлăхĕ», «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- чĕнӳ- йыхрав юррисемпе паллашса вĕсене мĕнле тĕллевпе каланине палăртма пултарни, мĕнле йĕркеленине сăнама пĕлни;
- шутлав сăввисем тахçан авал пулса кайнине ăнланни;
- тупмалли юмахсен хăйевĕрлĕхне, тытăмне сăнама пĕлни;
- илемлĕ хайлав мелĕсене (танлаштару, сăпатлантару) уйăрса илме пĕлни, вĕсене тупмалли юмахсенче тупайни; тупмалли юмахсем хайланă чухне çак мелсемпе усă курма пĕлни;
- «юмах» жанрăн хăйевĕрлĕхне ăнланса илни; юмах логикипе сюжетне сăнама пултарни; юмах тытăмĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçăмлама ăнтăлни;
- «илемлĕ литература», «хайлав», «автор» ăнлавсене уçса пама пултарни;
- «калав», «сăвă» ăнлавсене уçăмлайни;
- сăвăласа çырнă хайлавсен тулашĕ, вĕсен хăйевĕрлĕхне сăнаса курма, «рифма», «ритм» ăнлавсене уçăмлама пĕлни;
- сăвăри йĕрке вĕçĕсем сасă тĕлĕшĕнчен пĕр пек янăрани çеç çителĕксĕр, шухăш уçăмлăхĕ те пулмаллине ăнланни.

*Вĕренекенĕн çакна тума пултармалла:*

- калава ансаттăн тишкерме вĕренни;
- сăвăласа çырнă хайлавсене туйма- ăнланма (восприятие) вĕренни;
- автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни;
- калав мĕн çинчен пулнине ăнланни, калав темине уçăмлама вĕренни;
- калав теми унта мĕн çинчен каланипе çыхăнса тăнине ăнланни;
- илемлĕ хайлавсенчи шӳте ăнланма пĕлни.

### 2. Вĕренӳ предмечĕн шалашĕ

***Атьăр, паллашар***

Хайлав. Илемлĕ хайлав.Автор. Псевдоним. Сывă пул,çулла «Сăпайлăх», Александр Ильин «Машăпа автан», «Сывă-и, букварь», Юрий Петров «Урокра». Валентина Тарават «Шкула каяс умĕн».

**Чĕр чун тĕнчи**

Халăх сăмахлăхĕ (сăвви-юрри). Чĕнӳ- йыхрав сăвви-юрри. Шутлав сăввисем, тупмалли юмахсем. Вырăс халăх юррисем. Юхма Мишши «Кашкăр», «Упа», «Шур упа». К.Ушинский «Тилĕ тус», В. Давыдов-Анатри «Качака», «Тиллит-тиллит…», И. Яковлев «Автан», Анатолий Ыхра «Халĕ эпĕ улттăра», «Туслашни» , «Хăшĕ тĕрĕс каларĕ».

***Пахчи-пахчи, улма пахчи***

Тĕп сăнар. Хайлавăн теми. Сăнарсен шухăш-кăмăлĕ.Халăх юрри. Вăйă юррисем. Борис Данилов «Чи тутлисем». В.Давыдов- Анатри «Мĕншĕн тутлă», «Анне килчĕ кăнтăртан», Анатолий Юман «Чи тутли», Раиса Сарпи «Шурă хурлăхан».

***Кун йĕрки***

Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем. Хайлавăн теми. Юрий Сементер «Питĕ ăслă манн сехет», «Кремль сехечĕ», «Чăваш сехечĕ», Анатолий Ыхра «Ева садике каять», «Тăмана». Николай Карай «Маринепе пукане», Петĕр Эйзин «Мĕн тума»., Николай Ишентей «Çамрăк техниксем».

*Çемье*

Хайлавăн тĕп шухăшĕ. Шутлав сăввисем. Сăпка юррисем. Юлия Силэм «Кушак питне çăвать», Александр Ильин «Кам вăранать чи малтан», Николай Ытарай «Асанне». Виталий Енĕш «Асаннĕр пур-и», Денис Гордеев «Петюкпа мăлатук», Иван Яковлев «Чăлха çыхни», Пилеш Тани «Дачăра»,чăваш халăх юмахĕ «Аслă ывăл». И,Я Яковлев «Укĕт».

*Çулталăк вăхăчĕсем*

Илемлĕ вулав. Константин Иванов «Çулталăк хушши», К. Ушинский «Тăвата ĕмĕт», Василий Эктел «Юр», Юлия Силэм «Кантăка кам тĕрленĕ», «Кăвак сурăх», Уйăп Мишши «Хĕл илемĕ», Николай Теветкел «Март», Иван Малкай «Куккук», «Сăмах ваййи», Борис Тихонов «Шăнкăрч», Владимир Бараев «Шыва кĕме», Анатолий Ыхра «Пукан», Петĕр Ялкир «Çĕр улми». Николай Карай «Кураксем».

*Вулав кĕнекине чухласси*

Тупмаллипе усă курасси. Хайлав хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсене пурнăçласси. Кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлесси.

**Класс тулашĕнчи вулав**

*Вулав материалĕ*

Кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти халăх çыравçисен кĕнекисем. «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журналти материалсем.

*Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси*

Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене суйласа вулама, тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе, хаçат-журналпа усă курма пĕлесси.

Планпа усă курса мĕн вуланине кĕскен каласа парасси, вуланă сăнар çинчен çыхăнуллă калав тăвасси.

Кĕнеке мĕн çинченнине унăн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ÿкерчĕксем, ум сăмахĕпе юлашкинчен калани тăрăх ăнкарасси. Кирлĕ кĕнекен е хаçат-журналти статьян ятне, унăн авторне кăтартса тĕрĕс çырса илесси. Кăмăла каякан кĕнекене библиотекăран илсе вуласси.

**3. Литература вулавĕ урокĕсен тематикăлла планĕ**

| № | Тема | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| **Атьăр, паллашар** | | **4** |
| 1 | Сывă-и? | **1** |
| **2** | Сывă пул,çулла! | **1** |
| **3** | Шăнкăрав янăрать. | **1** |
| **4** | Эпĕ- шкул ачи. | **1** |
| **Чĕр чун тĕнчи** | | **7** |
| **5** | Вăрманта мĕн пурăнать? | **1** |
| **6** | Упа ăçта пурăнать? | **1** |
| **7** | Вылятпăр та юрлатпăр. | **1** |
| **8** | Тиллит-тиллит тилĕ тус. | **1** |
| **9** | Картиш хуçи - сар автан. | **1** |
| **10** | Кил хуралçи – Кампур. | **1** |
| **11** | Вылььăх картинчи сас-чÿ. | **1** |
| **Пахчи-пахчи, улма пахчи** | | **4** |
| **12** | Пахчи-пахчи, çимĕç пахчи. | **1** |
| **13** | Пахчи-пахчи, улма пахчи. | **1** |

| | | |
|---|---|---|
| **14** | Ман пахчара мĕн ўсет? | 1 |
| **15** | Чи тутли/ | 1 |
| | **Кун йĕрки** | **5** |
| **16** | Пўлĕмре сехет шаккать. | 1 |
| **17** | Тĕп сехетсем. | 1 |
| **18** | Кулленхи ĕçсем. | 1 |
| **19** | Ĕçлеме эп пит хавас. | 1 |
| **20** | Ĕç сынна илем кўрет. | 1 |
| | **Çемье** | **6** |
| **21** | Пирĕн туслă çемье. | 1 |
| **22** | Кам чи малтан тăрать? | 1 |
| **23** | Асаннеçĕм-асанне. | 1 |
| **24** | Пулăшасчĕ ман сире. | 1 |
| **25** | Кам ĕçлет, çав çиет. | 1 |
| **26** | Ўкĕт. | 1 |
| | **Çулталăк вăхăчĕсем** | **7** |
| **27** | Хăш вăхăт лайăхрах? | 1 |
| **28** | Хĕл илемĕ. | 1 |
| **29** | Хĕл кунĕсем. | 1 |
| **30** | Ырă çуркунне. | 1 |
| **31** | Çурхи юрăççем. | 1 |
| **32** | Çулла. | 1 |
| **33** | Асамçă кĕркунне. | 1 |
| | **Пурĕ** | 33 |
| | | |